Кил тата хушма хуçалăх

Ялан хастар пулнăран

Ильич ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнче пултаруллă та хастар ĕçченсем сахал мар. Вĕсенчен килет те ĕнтĕ пĕтĕмĕшле ĕç-пуç ăнăçлăхĕ. Çавна май Уйкас Янасалсен ĕç кăтартăвĕсем ял хуçалăх культурисем акса-лартса çитĕнтерессипе те ялăх мар, вылăхчĕрлĕх продукчĕсем туса илессипе те ўсĕмсем пур.

Сăн ўкерчĕкре эсир хуçалăхăн маттур ĕçченĕсене – тĕп инженера Георгий Сергеева тата машинăпа ĕне сăвакан оператора Юлия Ивановăна куратăр. Хăйсен хастар ĕçĕпе вĕсем Раççей Федерацийĕн Ял хуçалăх министерствин Тав çырăвĕсене илме тивĕçрĕç. Сăмах май производствăра тăрăшуллă пулнипе пĕрлех вĕсем килти хушма хуçалăха аталантарассипе те çине тăрса ĕçлеççĕ.

В. ШАПОШНИКОВ сăн ўкерчĕкĕ.

Кĕскен

Паянхи ĕçсем

Вăхăт утти çу кунĕсен варрине çитсе пырать. Çур аки чухне акнă-лартнă культурăсем паян йăрансене тулли илем кўрсе ўсеççĕ. Анчах вăхăтра акни-лартни кăна тухăç пысăк пулассине пĕлтермест. Йăран çинчи çимĕçсене çак вăхăтра пĕлсе апатлантарни тата шăварса тăни – пысăк тухăç никĕсĕ.

Çĕр улми çеçкисем çинче колорадо нăррисем активлăланчĕç. Пасарсенче тата магазинсенче сутакан химилле имçамсемпе «иккĕмĕш çăкăр» пуссисенче хальтерех усă курмалла. Ахальлĕн çĕр улми тухăçĕ палăрмаллах чакма пултарать. Çĕр улми пуссисене кăпкалатассипе çумран тасатасси те – паянхи ĕç.

Пуçлă суханпа çурхи ыхра утă уйăхĕн пуçламăшĕнче пуçĕсене çавăрма тытăнаççĕ. Лайăх аталанма вĕсене çак вăхăтра минераллă удобренипе апатлантарни вырăнлă пулăшу парать. Çакна валли 10 грамм мочевинăна, 20 грамм суперфосфата, 10 грамм кали тăварне 10 литр шывра ирĕлтермелле. Тепĕр 3 – 4 эрнерен çак удобренисен кăшт пысăкрах виçипе тепре апатлантармалла.

Пахчаçăн органика удобренийĕ те юрăхлă пулни пирки манас марччĕ. Ĕне тислĕкĕн ирĕлчĕкне 1:5, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕн ирĕлчĕкне 1:10 виçепе хутăштарса хатĕрлени йăран çинчи çимĕçсене апатлантарма питех те меллĕ.

М. АЛЕКСАНДРОВ, агроном.

Сад-пахчаçăн уйăх календарĕ

Утă уйăхĕ – çу тўпи

Ку уйăх – йывăç-курăк активлă ўснĕ вăхăт. Çавăнпа та улмуççисемпе грушăсен, сливăсен тата пахчари ытти улма-çырла йывăççисен хунавĕсен тăррисене кĕскетмелле. Çакă хунавсем çўллĕ ўссе каясран сыхлать тата вĕсене сарăлса çирĕпленме май туса парать. Пахчаçăсем çак ĕçсене пурăна-киле улма-çырла тутармалли туратсем çинче пурнăçлаççĕ.

Нумай çимĕçлĕ туратсем айне тĕкĕ лартассипе те çак уйăхрах ĕçсем туса ирттермелле. Йывăççене тăтăш шăвармалла, апатлантармалла. Улма-çырла йывăççисен сăтăрçисемпе тата чир-чĕрĕсемпе кĕрешессине те кая хăвармалла мар.

Томатсемшĕн утă уйăхĕн вĕçĕ фитофторăпа хăрушă. Çавăнпа та вĕсене профилактика тĕлĕшĕпе пĕр процентлă бордоск шĕвекĕпе пĕрĕхсе тухмалла. Хăрама кирлĕ мар, вăл пиçме пуçланă помидорсене сиен тумасть.

Халăхра утă уйăхĕ пирки çапла калани-сăнанисем пур. Утă уйăхĕ шăрăх пулсан, кăрлач уйăхĕ шартлама сивĕпе пуян пулать. Утă уйăхĕ – çу варри, раштав – хĕл çĕлĕкĕ. Утă уйăхĕ – аслати вăхăчĕ, шалкăм çумăрсен тапхăрĕ.

Утă уйăхĕн 1–2-мĕшĕсем. Ўсен-тăрана ўсме пулăшакан стимуляторпа пĕрĕхмелле. Йывăççене касма, хунавсен тăррисене кĕскетме юрамасть. Шăварма тата çĕре кăпкалатма меллĕ. Нумай çул ўсекен сухана, укропа, салата акма юрать. Салат, шпинат, хăяр тата тĕслĕ купăста пухма меллĕ.

Утă уйăхĕн 2–4-мĕшĕсем. Нимĕн те акма-лартма, куçарса лартма, хунавсене кĕскетме юрамасть. Хуçалăх ĕçĕсене пурнăçламалла.

Утă уйăхĕн 4–5-мĕшĕсем. Çум курăкĕпе кĕрешмелле. Çĕре кăпкалатмалла. Хĕл каçарас тĕллевпе çарăк акмалла. Помидорсене, пăрăçпа баклажана, хăяра апатлантармалла. Çак ĕçех улма-çырла йывăççисемпе те туса ирттермелле.

Утă уйăхĕн 5–7-мĕшĕсем. Уйăх календарĕпе килĕшўллĕн пахча çимĕç культурисене акма тата лартма юрамасть. Ўсен-тăрана çак кунсенче ўссе аталанма пулăшакан стимуляторпа пĕрĕхме ан манăр. Улма-çырла йывăççисен вуллисем тавра органикăллă удобрани сапаласа хуни ытлашши пулмасть. Типĕтме хумалли пахча çимĕççемпе курăксене пуçтарса хурассипе тимлемелле.

(Малалли пулать).

Федераллă миграци службинчен

Электронлă мелпе усă курăр

РФ федераллă миграци служби граждансене патшалăх услугисем парассине тĕллевлĕ çĕнетсе пырать. Юлашки вăхăтра çак çĕнĕлĕхсен шутне патшалăх услугисене электронлă мелпе пани кĕрет. Унпа усă курас тесен гражданинăн патшалăх тата муниципаллă пулăшăвĕсен пĕрлехи порталĕнче www.gosuslugi.ru адреспа регистрациленмелле.

Граждансене паспортсене вăхăтра улăштарманшăн е тăтăш (вăхăтлăх) пурăнакан вырăнта вăхăтра регистрациленменшĕн час-часах административлă майпа явап тыттаратпăр.

Патшалăх услугисене электронлă мелпе илнĕ чух 1500-2500 тенкĕ штраф тўлессинчен вăхăтра пăрăнса иртме пулать. РФ гражданинĕн паспортне улăштарма е çĕннине илме вăхăт çитсен çакна тума 30 кун хушшинче умри компьютер урлă заявлени пама пулать. Çакна хальлĕхе нумайăшĕ пĕлсех каймасть-ха. Ку вара ĕçлĕ çынна хушма вăхăт тупса парать.

Патшалăх тата муниципалитет услугисен пĕрлехи порталĕ чылай ĕçе çăмăллатать. Электронлă мелпе ыйтса çырни çынсен вăхăтне перекетлеме пулăшать, çак ĕçе кану кунĕсенче те, кирек хăш вырăнтан та пурнăçлама май парать. Ыйтса çыраканпа ăна йышăнакан хушшинче коррупци çулĕ пўлĕнет.

РФ федераллă миграци службин Чăваш Республикинчи управленийĕ электронлă майпа çак услугăсемпе тивĕçтерме пултарать:

– ют çĕр-шыв гражданĕсемпе гражданлăхсăр çынсене вăхăтлăх пурăнма ирĕк парать, вăхăт тухсан çак тапхăра тăсать;

– уйрăм çынсем ыйтнипе Раççей Федерацине кĕме чĕнўсем тăвать;

– РФ гражданинне паспорт парать е улăштарать;

– адреспа справка информацийĕпе тивĕçтерет;

– граждансем вăхăтлăх е ялан пурăнакан вырăнсенче регистраци учетне туса пырать.

Ан манăр, пĕрлехи портал урлă ĕçлени миграци службинче ĕçлекенсемпе граждансем хушшинчи тĕл пулусене пачах пăрахăçланине пĕлтермест. Граждансен çак услугăсене электронлă майпа ыйтса çырсан та миграци службине çакăн чухне пĕрре килмеллех пулать:

– ют çĕр-шывăн кивĕ тĕслĕ паспорчĕсене йĕркелеме;

– РФ гражданинĕн паспортне йĕркелеме;

– пурăннă вырăнта регистрациленме тата регистрацирен тухма;

– вăхăтлăх пурăнма ирĕк илнĕ чух;

– Раççей Федерацине ют çĕр-шыв гражданĕсене тата гражданствăсăр çынсене чĕннĕ чух.

Çĕнĕ йышши ют çĕр-шыв гражданинĕн паспортне илес текенсен ЧР миграци службине икĕ хутчен каймалла пулать: биометрикăллă сăн ўкерчĕкпе тата хатĕр документа алла илме.

Л. ПЛЕЧОВА, федераллă миграци службин районти территори пункчĕн пуçлăхĕ.

Тухтăр канашĕ

Арони çырлин усси

Арони çырлипе халăх медицининче анлăн усă кураççĕ. Паян хаçат вулакансене çакăн йĕркисемпе паллаштаратăп. 1 килограмм çырла çине 700 грамм сахăр песукĕ ямалла, пусăрăнтармалла. Çакăн пек хутăша атеросклероз чирĕнчен кунне 2–3 хутчен 100 грамм çимелле. Астени, гиповитаминоз чирĕ пулсан кашни кун 2–3 хутчен 250 грамм аронин чĕрĕ çырлине хура пилешпе пĕрле çимелле, шиповник шывĕпе ĕçмелле. Гипертонирен сипленес текенсен апатланиччен 50 грамм сĕткене 30 минут маларах кунне 3 хутчен ĕçмелле. Ку мелпе 10 кун хушши сипленмелле. Хĕлле хура пилеш организма пĕтĕмĕшле çирĕплетет. 20 грамм типĕтнĕ çырлана 200 миллилитр вĕренĕ шывпа пăшăхтармалла, икĕ эрне хушши çуршар стакан кунне 3–4 хутчен ĕçмелле.

Сипленĕр, сывлăхлă пулăр!

В. ГРИГОРЬЕВА, пĕтĕмĕшле практика врачĕ.

Тĕпелте

Ансат та тутлă

1 стакан турăх, 1 стакан сахăр, 1 стакан манна кĕрпи, 1 стакан çăнăх, 3 çăмарта, пĕр чĕптĕм апат соди кирлĕ.

Пурне те пĕрле пăтратмалла. Иçĕм çырли, майăр, какао хушсан та, хушмасан та юрать. Вĕри духовкăна лартса пĕçермелли çеç юлать.

Пирĕн пата çыраççĕ

Ырă кўршĕ

Уйкас Янасал ялĕнче Анна ятлă кинемей пурăнать. Ăна Анна Лазаревна тесе чĕнеççĕ. Пирĕншĕн вăл питĕ лайăх кўршĕ. Ачасене Анна кинемей яланах хавас. Пире тĕрлĕрен интереслĕ пулăмсем çинчен каласа парать. Ман çак кинемей çинчен нумайрах пĕлес килчĕ. Çавăнпа эпĕ ăна хăйĕн пурнăçĕ çинчен каласа пама ыйтрăм.

Анна Лазаревна Лазарева 1925 çулта Уйкас Янасал ялĕнче çуралнă. Хăйсен тата Исетерккĕ ялĕсенчи шкулсенче вĕреннĕ. Кайран Етĕрне районĕнчи Советскинчи шкула каять. Вăл 8 класс пĕтернĕ вăхăтра фашистла Германи пирĕн çĕр-шыва вăрçăпа килет. Аннан икĕ пиччĕшне те вăрça илсе каяççĕ. Килте мăшăрĕсем ачисемпе тăрса юлаççĕ. Унăн икĕ пиччĕшĕ те вăрçăран тавpăнаймаççĕ. Килте пĕчĕк ачасем. Аслă пиччĕшĕн 4 ачи. Аслă ачи çиччĕ те тултарман. Нумай та пурăнаймаççĕ, пиччĕшĕн арăмĕпе пĕр ачи чирлесе вилеççĕ. Виçĕ ачи вара хăр тăлăха тăрса юлаççĕ. Çав ачасене Анна кинемейăн пăхса çитĕнтерме тивет.

Анна Советскинчи вăтам шкула 1943 çулта питĕ лайăх паллăсемпе вĕренсе пĕтерет. Вăл вăхăтра лайăх паллăсемпе вĕренсе пĕтернисене институтсене экзаменсăрах илнĕ. Анчах унăн, институтсенчен чĕнсе çырнă хутсем килнĕ пулсан та, вĕренме кайма май килмен. Килте виçĕ ватă тата аслă пиччĕшĕн тăлăха юлнă виçĕ ачи пулнă.

Вăрçă вăхăтĕнче учительсем çитмен, арçын учительсене вăрça илсе кайнă. 1943 çулта Анна Лазаревнăна Етĕрне районĕнчи Анат Сăнар ялĕнчи шкула кĕçĕн классене вĕрентме яраççĕ. Вĕренў çулĕ пуçлансан тăватă класне те пĕччĕнех вĕрентмелле пулать. Çĕнĕ çул хыççăн тепĕр ватă учителе шкула яраççĕ. Анна Лазаревна килте тата каникул вăхăтĕнче Етĕрнери педучилищĕре вĕренсе экстерн майпа диплом илет. Анат Сăнар ялĕнче 1943–1945 çулсенче ĕçлет. Ун хыççăн Якаткассинчи шкулта 1945–1947 çулсенче ачасене вĕрентет.

Вăрçă вăхăтĕнче те, вăрçă чарăнсан та çăмăл пулман. Çĕр-шыва ура çине тăратмалла. Туса илнĕ тырпула патшалăха памалла. Плана пурнăçламалла. Ял çыннин вутăшанкă та çителĕксĕр, çие тăхăнмалли çи-пуçне те хăйĕннех тумалла. Анна Лазаревна 1948 çулта учитель ĕçне пăрахса тăван Ильич ячĕпе хисепленекен колхоза тавpăнать. Маттур çамрăка колхоз бухгалтерине вырнаçтараççĕ. Унта вăл счетоводкассир ĕçне туса пырать. Мĕн пенсие тухиччeнех ырми-канми тăрăшать. Ăна «Ĕç ветеранĕ» медальпе наградăланă. Вăрçă вăхăтĕнче тăрăшса ĕçленĕшĕн сахал мар медаль илме тивĕçлĕ пулать.

Кинемейăн икĕ хĕрĕ Шупашкарта пурăнаççĕ. Вĕсем те пенсире ĕнтĕ. Анчах та амăш пекех ĕçсĕр лармаççĕ. Пĕр хĕрĕ кооператив институтĕнче студентсене вĕрентет, тепри проект институтĕнче çĕр ĕçĕпе инженер пулса ĕçлет. Ачисем кинемей патне килсех çўреççĕ. Йывăр ĕçсене туса пулăшаççĕ.

Халĕ пурнăç лайăх, пурăнмалла та пурăнмалла, анчах ватлăх çулĕсем çавах хăйсеннех тăваççĕ, вăйсем чаксах пыраççĕ тесе хурланса калаçать ватă кинемей. Кўршĕ çавах хăйне хаваслă тытать.

Анастасия СЕМЕНОВА, Сосновкăри пĕтĕмĕшле пĕлў паракан тĕп шкулта вĕренекен.